**Хам чăваш пулнишĕн мухтанатăп**

Çĕршывра ăçта кăна çитместĕп,
Пур çĕрте те маншăн пархатар.
Хам чăваш пулнишĕн именместĕп.
Никамран та эпĕ катăк мар.

Темĕн вырăнне хама хумасăр,
Çынпа тан пулнишĕн савăнса
Эп çӳретĕп ирĕклĕ те харсăр,
Çавăнпа пырать ман çул ăнса.

Хам чыса эп куç пекех сыхлатăп.
Юнăмра мăнкăмăллăх пур ман.
Хам чăваш пулнишĕн мухтанатăп.
Эс те, тусăм, ху камне ан ман.

*Воробьев, А. Хам чăваш пулнишĕн мухтанатăп : [сăвă] / А. Воробьев // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 180.*